**Террора хирĕç кĕрешекен комисси ларăвĕнчен**

# Уявсем лăпкă иртчĕр тесе

Çĕнĕ çул уявĕсем пуçланнăпа пĕрех ĕнтĕ. Вĕсем йĕркеллĕ, пĕр инкек-синкексĕр иртсе кайччăр тесе районта мĕн тăваççĕ? Çак кунсенче иртнĕ районти терроризма акцисене хирĕç кĕрешекен комисси хăйĕн ларăвĕнче шăпах Çĕнĕ Çул тата Сурхури уявĕсене йĕркеллĕ хатĕрленсе ирттерес ыйтăва пăхса тухрĕ. Ларăва район пуçлăхĕ, асăннă комисси председателĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн ертўçи В.А. Григорьев палăртнă тăрăх район территорийĕнче экстремистла тата терроррла актсем ан пулччăр тесе районти шалти ĕçсен пайĕ хăйĕнчен килнине йăлтах туса ирттерет. Çавăн пекех – йывăр преступленисене, саккуна пăсса хĕç-пăшал е сирпĕтмелли хатĕр сутассине тупса палăртса инкеке сирсе ярас енĕпе те. Хамăр районта пурăнакан Çурçĕр Кавказран тухнă 7 çынран та куçа вĕçертмеççĕ. Пĕтĕмпе вара кăçал районта ют çĕршыв çыннисем 123-ĕн пулнă, хальхи вăхăтра – 15 çын. 2 тапхăрпа иртнĕ «Нелегал» операци вăхăтĕнче ют çĕршыв çыннисем право йĕркине пăснă 13 тĕслĕхе тупса палăртнă. Район сучĕн йышăнăвĕпе килĕшўллĕн Грузи гражданинне РФ территорийĕнчен кăларса янă, тепĕр 12 ют çĕршыв çыннине административлă майпа явап тыттарнă. Çулталăкĕпех халăх, çамрăксем нумайăн пуçтарăнакан вырăнсене тĕрĕслесех тăнă. Çамрăксем экстремистла ушкăнсене кĕнине тупса палăртман.

Çакна та палăртса хăвармалла, районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем экстремистла тата терророла шухăшлă аудио-, видео- тата ытти материалсене сарассине, çавăн пекех саккуна пăсса район территорине хĕç-пăшал, сирпĕтмелли хатĕрсем, наркăмăшлантармалли веществосем илсе кĕрессине тытса чарассипе те тимлеççĕ.

Вулакансене çакна пĕлтерсен те вырăнлă. Октябрь уйăхĕнчен пуçласа паян кунччĕнех республикăра терроризма хирĕç анлă акци пырать. Çавна май халăх массăллăн пуçтарăнакан вырăнсене (шкулсемпе ача сачĕсене, культура учрежденийĕсене, больницăсене, пасарсене) тĕрĕслесех тăраççĕ. Унсăр пуçне кашни кунах уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пĕрер объектăн пурлăхпа техника базин çирĕплĕхне тишкереççĕ.

Çĕнĕ çул тата Сурхури уявĕсем вăхăтĕнче вара районти 55 культура учрежденийĕнче, çавăн пекех 10 чиркўре кашни кунах шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем дежурствăра пулĕç. Уявсем умĕн халăх массăллăн пуçтарăнакан вырăнсене (культура учрежденийĕсемпе чиркўсене) ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле пушар хуралĕн, МЧСăн, шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем сирпĕтмелли, иккĕленў çуратакан япаласем ан пулччăр тесе тĕрĕслеççĕ.

Хальхи вăхăтра вара районти шалти ĕçсен пайĕн ĕçченĕсем вăрмансенче саккуна пăсса чăрăшсене ан касчăр, пасарсенче вĕсене саккуна пăсса ан сутчăр тесе тĕрĕслевсем ирттереççĕ. Кĕскен каласан, уявсем вăхăтĕнче районти шалти ĕçсен пайĕ хăйĕн ĕçне палăрмаллах вăйлатать.

Ларура çавăн пекех районти топливăпа энергетика, газ комплексĕ, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх тата пурнăçшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ объектсенче терроррла актсенчен сыхланас шай мĕнле пулнине пăхса тухрĕç. «Чувашсетьгаз» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн «Моргаушрайгаз» филиалĕн ертўçи Р.Х. Чебенов, «Чувашэнерго» акционерсен уçă обществин Çурçĕр электричество сечĕсен филиалĕн ертўçи В.В. Егоров, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертўçи В.Г. Никитин ларура уявсемпе «хĕллехи каникулта» пурнăçшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пур объектсенче те ятарлă бригадăсем ĕçленине палăртрĕç.

Ларура çавăн пекех «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен уçă обществинче сыхлăх системи мĕнле ĕçленине тишкерчĕç, комиссин çитес çулхи ĕç планне йышăнчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Эрехрен пуçланать пĕтĕм куççулĕ...**

# Районти профилактика канашĕн ларăвĕ хыççăнхи шухăшсем

Çак кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи право йĕркине пăсассине хирĕç кĕрешекен профилактика канашĕн ларăвĕ пулса иртрĕ. Ăна район пуçлăхĕ, асăннă комисси ертўçи Ю.А. Иванов ертсе пычĕ. Унта 2009-2012 çулсене валли Право йĕркине пăсассине хирĕç туса ирттермелли профилактика ĕçĕсен программине пăхса тухрĕç. Çавăн пекех комисси ларăвĕнче малтан тунă йышăнусене мĕнле пурнăçланине тишкерчĕç, комиссин çитес çулхи ĕç планне çирĕплетрĕç.

Кунта тўрех çак ыйту сиксе тухма пултарать: мĕн тума пулăшать асăнннă Программа? Хуравĕ пĕрре: районти криминогенлă лару-тăрăва палăрмаллах лайăхлатма. Чăннипех те, районти шалти ĕçсен пайĕ право йĕркине сыхлакан ытти органсемпе нумай профилактика ĕçĕсене туса ирттерет лару-тăру лăпкă пултăр тесе. Апла пулин те тата та хытăрах ĕçлемелли енсем çителĕклех-ха. Районти шалти ĕçсен пайĕн обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕ В.А. Григорьев палăртнă тăрăх, çулсеренех ниçта та ĕçлеменнисем тăвакан преступленисен йышĕ ўссе пырать. Кăçал вăл пĕтĕм преступленисен 49,8 (пĕлтĕр – 46,6) процентчĕ.

Ирĕкрен хăтармалли вырăнсенчен таврăннисенчен те куçа вĕçертмелле мар. Рецидивлă преступленисен шучĕ тунă пĕтĕм преступленисенчен 34,1 (28,2) процент пулни те çакнах çирĕплетет. Ку каллех вĕсен ĕç вырăнĕсем çуккипе çыхăннă. Мĕншĕн тесен тĕрмерен таврăнакансене нихăш предприятинче те ĕçе илесшĕнех мар.

Е тата хамăра çывăхарах проблемăна илер. Ялта кам мĕнле пурăннине кашниех пĕлет: ăçта паян чашăк-тирĕк шăкăртатнă, ăçта пулăшу ыйтакан сас хытăрах та тухнă. Анчах та кўршĕ-аршăсен çемйинчи харкашăва никам та чарма шутламастпăр. Çапла вĕт. Кун пек тĕслĕхсем сахал пулаççĕ-и? Чăнах та, хушша-хуппа кĕрсе камăн усал пулса юлас килтĕр? Кунта мана ирĕксĕрех темиçе çул каяллах пĕр милици ĕçченĕ каланă сăмахсем аса килеççĕ:

–Арăмĕсем малтан, пулăшăр-ха, упăшка хĕнет, тесе милицине шăнкăравлаççĕ. Кайран ман упăшка выçă ларать пуль тесе вĕсем патне вĕри яшка пĕçерсе чупаççĕ, – терĕ вăл.

Пĕрисем асăрхаманçи пулнипе, теприсем пĕрмаях хĕнекен мăшăрĕсене каçарнипе мар-ши тавăрайми инкексем пулаççĕ районта? Кăçал кăна йăлари харкашура питĕ йывăр 6 преступлени тунă, çынна вĕлернĕ тĕслĕх 3 пулнă, сывлăха йывăр сиен кўнипе çын вилнĕ тĕслĕх – 1, çаратни – 1, сексуаллă характерлă ирĕксĕрлев – 1 тĕслĕх. Пĕтĕмпе йăлари харкашăва пула кăçал 92 преступлени тунă, пĕлтĕр – 80.

Инкекĕн вĕçĕ-хĕрри çук тени тĕрĕсех иккен. Çак йăлари преступленисене тишкерни çакна кăтарса парать: вĕсенчен ытларахăшне ўсĕрле тунă. Апла пулсан район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа ниепле те килĕшмесĕр тăма май çук:

–Эрех-сăрапа иртĕхессине хирĕç кĕрешмелле чи малтан, – терĕ вăл. –Пĕтĕм инкек унран пуçланать.

Çак сăмахсен тĕрĕслĕхне шырама инçе каймалла мар вĕт. Йĕритавралла çаврăнса пăхăр-ха: сирĕн ялта миçе çемьере ĕçкĕпе иртĕхеççĕ? Арçынсем кăна ĕçсен татахчĕ-ха. Хĕрарăм ачисен пурнăçне майлаштарса пыратех. Инкеке, халь хĕрарăмсем, çитменнине çамрăк хĕрарăмсем, ĕçме пуçларĕç. Çуллахи пĕр ўкерчĕк тухса тăрать. Велосипед патĕнче такам чакаланать. Ўсĕр хĕрарăм иккен, мĕнле тăрăшсан та ура çине тăраймасть. Çывăхарах пырсан, камне палласан, чĕре ыратсах кайрĕ, иккĕмĕш ачи те кăкăр пăрахман-ха ун. Мĕнле çитсе пĕтрĕ-ши килне, кампа пулчĕ-ши çав вăхăтра унăн сăпкара выртакан ачи?

Кун пек тĕслĕхсем районта пĕрре мар тĕл пулаççĕ. Ирĕксĕрех тĕнче илтмеллех çапла ыйтас килет хамăртан: кам ирĕксĕр ярать пире, хĕрарăмсене, карланкăран эрехе? Никам та. Картран тухса каймалла мар, ачасем çинчен манмалла мар. Çакна тума укçа кирлĕ мар вĕт. Чун кирлĕ, амăшĕн чĕри.

Эрехпе çыхланни ырри патне илсе пымасть-çке. Кăçал кăна 79 преступление ўсĕрле тунă. Эрех ĕçсе право йĕркине административлă майпа пăснă тĕслĕхсем кăçал 2190 (1952) çитрĕç. Обществăлла вырăнта ўсĕр çўренĕшĕн кăна 1680 протокол çырнă. Вĕсен хушшинче çамрăксем те çителĕклех. Эрехе паян таçтан та туянма пулать. Магазинта илме укçу çитмесен, ялта сăмакунпа сутă тваакан «инкекрен çăлать». Кăçал çакăн пек услам тăвакансене 57 хутчен явап тыттарнă. Çулталăк пуçланнăранпа больницăра эрехпе наркăмăшланнă 25 çынна пулăшу pană, вĕсенчен 7-шĕн пурнăçне ниепле çăлса хăварма май пулман. Миçе ача тăлăха юлчĕ? Эрех ĕçме пурпĕрех пăрахмастпăр: инкек пирĕн тĕлтен пăрăнса иртессе шанатпăр-ши? Вăл вара никама та хĕрхенмест: ўсĕр çынна çул çинчех шăнтса лартать, килте пĕччен юлнă, выçă ларакан ачасен куççулĕ те уншăн ним те мар.

...Хĕрарăм киле ўсĕр сулкаланса пырса кĕчĕ. 5 çулсенчи ача ун патне чупса пычĕ:

– Анне, аннеçĕм, ăçта пултăн эсĕ? Эпĕ питĕ хăрарăм пĕччен. Эсĕ урăх ниçта та ан кай. Эпĕ сана юрататăп...

Ку та пирĕн пурнăçри ўкерчĕкех. Çак сасса, хамăр кун-çул панă ачасен сассине илтмесен, пулăшу ыйтса, чун ăшши, юрату кĕтсе тилмĕрекен ачасен куçĕсене те курмасан, вĕсен юратăвне туймасан, амăшĕ-и, ашшĕ-и эпир? Вĕсен шанăçне, пурнăçне хуççах эрех черккинче шампăлтатас марччĕ.

**Л. ТУКТИНА.**

**Прокуратура хыпарĕсем**

# Ĕç укçи панине тĕрĕслетпĕр

Ĕç коллективĕсенче граждансене ĕç укçине вăхăтра тўленине пăхса тăрассине Муркаш район прокуратурин пĕлтерĕшлĕ енĕ тесе ĕçлетпĕр. Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 136-мĕш статйин 6-мĕш пункчĕпе килĕшўллĕн ĕç укçине предприяти-организацири ĕç йĕркипе, коллективлă тата ĕç килĕшĕвĕсемпе кашни çур уйăхра пĕрре тўлемелле. Ахальлĕн Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 142-мĕш статйин 1-мĕш пунктĕнче палăртнă пек ĕç паракан е саккунпа килĕшўллĕн палăртнă ĕç паракан представителĕ Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕпе тата ытти федераллă саккунсемпе яваплă пулса тăраççĕ.

Саккунăн 419 стайинче ĕç законодательствине пăснăшăн дисциплинарлă тата материаллă явап тыттарасси пирки каланă. Кунпа пĕрлех уйрăмах «хастаррисем» тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарасси пирки те каланă.

Нумаях пулмасть ирттернĕ тĕрĕслевре вăхăтра ĕç укçи тўлемен тĕслĕхсем Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче тата ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра палăрчĕç.

Председательсене çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме хушса хăвартăмăр.

**С. ФИРСОВ, район прокурорĕ.**

# Ывăл çине алă çĕкленĕшĕн

Ашшĕ-амăшĕсен ачисене воспитани парас яваплăха Раççей Федерацийĕн Çемье кодексĕн 63-мĕш статйинче çирĕплетсе хăварнă. Ашшĕ-амăшĕсен ачисене çирĕп кĕлеткеллĕ, психика тата кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен сывă пăхса ўстерсе çĕр-шыва юрăхлă çынсем тумалла. Ашшĕ-амăшĕсен прависем ача интересĕсене хирĕçлемелле мар. Ачасене воспитани панă чухне чăрсăр пулнине вара саккун тĕрĕслесех тăрать.

Акă 2008 çулхи августăн 12-мĕшĕнче хăйсен килĕнче хăйсем хушшинчи килĕштерменлĕхе курса тăрса ашшĕ «ыраттарса тăн кĕртме» тесех çул çитмен ывăлне алăпа çапать.

... Мировой судья йышăнăвĕпе çул çитмен Артем çине алă çĕклесе саккуна пăснăшăн унăн ашшĕне пĕр çулталăк та 4 уйăх ирĕкрен хăтармалла тунă. Айăплава условнăй йĕрке çине куçарнăран «харсăр» ашшĕне 2 çул тĕрĕслев вăхăчĕ панă.

**Г. ЕРЕМЕЕВА, прокурора пулăшакан.**

# Ачасем тата наркомани

Иртнĕ уйăхра район прокуратури çул çитмен çамрăксене çапкаланса çўресрен тата право йĕркине пăсасран пăхса тăракан профилактика субъекчĕсене çул çитмен çамрăксем хушшинче наркомание хирĕç кĕрешсе мĕнле ĕçсем туса ирттернине тĕрĕслерĕмĕр.

«Наркотикла япаласем тата психотроплă хатĕрсем çинчен» Федераллă саккуна пурнăçласа район администрацийĕ çумĕнче ятарлă комисси йĕркеленĕ. Çавăнпа пĕрлех профилактика субъекчĕсем çул çитмен çамрăксем тĕлĕшпе преступлени тăвасран тата право йĕркине пăсасран чылай ĕçсем туса ирттерни палăрчĕ. Çапах та асăннă ĕç çитменлĕхсемсĕр мар.

Тĕрĕслев пĕтĕмлетĕвĕсемпе районти тĕп больницăн тĕп врачне, çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хўтĕлекен комисси председательне, районти шалти ĕçсен пайĕн ертўçине тупăннă çитменлĕхсене пĕтерме хушса хăвартăмăр.

**Е. КУЗЬМИНА, прокурора пулăшакан.**

**Официально**

# В сегодняшнем номере - Приложения к райгазете

В Приложениях к райгазете от 27 декабря 2008 года печатаются:

- решение Собрания депутатов Александровского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/8 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Александровского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Большесундырского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/9 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Большесундырского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Ильинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/10 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Ильинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Кадикасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/11 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Кадикасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/12 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Моргаушского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Москакасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/13 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Москакасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Орининского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/14 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Орининского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Сятракасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/15 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Сятракасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Тораевского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/16 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Тораевского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Хорнойского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/17 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Хорнойского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Чуманкасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/18 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Чуманкасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Шатьмапосинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/19 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Шатьмапосинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/20 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Юнгинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Юськасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/21 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Юськасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Ярабайкасинского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/22 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Ярабайкасинского сельского поселения»;
- решение Собрания депутатов Ярославского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/23 «О принятии к осуществлению части полномочий администрации Ярославского сельского поселения».
- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 05.12.2008 г. № С-30/4 «О порядке обращения муниципальных служащих Моргаушского района Чувашской Республики за пенсией за выслугу лет, ее назначения и выплаты».
- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 05.12.2008 г. № С-30/3 «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007 г. № С-22/3 «О районном бюджете Моргаушского района на 2008 год».
- Решение Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-29/6 «О принятии части полномочий администрации Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики».
- Решение Собрания депутатов Моргаушского сельского поселения от 27.11.2008 г. № С-30/7 «О принятии части полномочий администрации Моргаушского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики».